Ендеров В.А.
Чăваш патшалăх гуманитари
ăслăлăхĕсен институтĕн
наукăн аслă сотрудникĕ,
филологи наукисен кандидачĕ

**Чăваш халăхĕн сумлă ывăлĕн**
**тата ăсчахĕн ятне асра тытса**

2008 çулхи авăн уйăхĕн 27-мĕшĕнче чăвашсен паллă фольклорисчĕ, тĕпчевçи, методисчĕ тата педагогĕ, филологи наукисен кандидачĕ Иван Ильич Одюков профессор çуралнăранпа 85 çул çитет. Кашни çын этем тивĕçне пурнăçлама тĕрлĕрен çул суйласа илет, хăйĕн хыççăн ырă ят хăварма тăрăшать. Пирĕншĕн тата пулас ăрусемшĕн вĕсем – чăннипех çут çăлтăр.

Çакнашкал çăлтăрсен шутне эпĕ пĕр иккĕленмесĕрех И. И. Одюкова та кĕртесшĕн: хăйĕн тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕнче вăл халăха пуринчен ытларах интереслентерекен ыйтусене хускатрĕ, чăваш çыннин ĕмĕчĕпе шухăш-кăмăлĕ çырусăр сăмахлăхра еплерех -керĕнсе юлнине тĕрĕс çырса кăтартрĕ. Иван Ильичăн 100 яхăн пичетленнĕ тĕпчевĕсенче фольклорпа интересленекенсем хăйсене хумхантаракан нумай ыйту çине хурав тупаççĕ. Чăваш литературоведенийĕнче те унăн ячĕ – сумлă вырăнта.

«Лаша пуласси – тихаран, çын пуласси – ачаран паллă», – тенĕ сăмахсем И. И. Одюков пиркиех каланăн туйăнаççĕ мана. Унăн халăх сăмахлăхĕн тĕпчевçи пуласси ача чухнех ăша юлнă. Вăл пĕчĕкренех халăх юрри-сăввисене, юмахĕсене итлеме юратнă, çак юрату çултан-çул вăйланса пынă...

Одюков Иван Ильич 1923 çулхи сентябрĕн 27-мĕшĕнче Чăваш Республикин Шупашкар районне кĕрекен Атăлъялта вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Çак ял аслă Атăл хĕрринчи çӳллĕ çыранта вырнаçнă. Урамĕсенче лаштра йăмрасем кашласа ларнă. «Ку ялта кăмăллă, хастар çынсем пурăнаççĕ. Вĕсем аслă юхан шыв пек ĕçчен, канăççăр»[1]. Çакăн пек

илемлӗ те хитре ялта, кӑмӑллӑ та сӑпай ял-йыш хушшинче ӳссе ҫитӗннӗ те ӗнтӗ Иван Ильич.

Тӑван ялта, Кипеккассинчи пуҫламӑш шкулта, ун хыҫҫӑн 12 ҫухрӑмра ларакан Ишлейри вӑтам шкулта вӗренет, ӑс пухать. «Шӑпах ҫак вӑхӑтра унӑн пултарулӑх йӗрӗ палӑрма пуҫланӑ: вӑл юрӑ-сӑвӑсене, юмах-халапсене питӗ юратнӑ, хӑй те юрлама, купӑс калама кӑмӑлланӑ. Каччӑ малалла вӗренсе, Тӑван ҫӗр-шывшӑн усӑллӑ ҫын пулма ӗмӗтленнӗ»[2].

1941 ҫ. Иван Одюков Шупашкара педагогика институтне вӗренме кӗме экзаменсем ӑнӑҫлӑ тытать, студент пулса тӑрать. Кунта ӑна нумай вӗренме тӳр килмест, 1942 ҫ. май уйӑхӗнче вун тӑххӑра пуснӑ каччӑна Ярославль хулинче вырнаҫнӑ пехота училищине вӗренме яраҫҫӗ. Мӗн тӑвӑн – ҫӗр-шыв умне хӑрушлӑх сиксе тухнӑ, тӑшмана хирӗҫ тӑма ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ вӑйсем кирлӗ пулнӑ. Ҫав ҫулах пехота училищинче вӗренекенсене те фронта ӑсатаҫҫӗ.

Ҫапла И. Одюков вут-ҫулӑм айне кайса лекет. «Вӑрӑма тӑсӑлать салтакӑн вӑрҫӑ ҫулӗ. Нарва, Пулково ҫывӑхӗнчи ҫапӑҫусенче Иван Одюков хӑйӗн хӑюлӑхӗпе ҫирӗплӗхне кӑтартать, чун хавалне пӗтӗмпех ҫӗнтерӗве ҫывхартма парать. Ҫакна кура ӑна батальон комсоргне суйлаҫҫӗ», – тесе ҫырать И.Тенюшев журналист[3] ун пирки.

Ленинград фрончӗн пӑр ҫинчи пӗр ҫапӑҫӑвӗнче салтак йывӑр аманать. Тавралӑх тӗттӗмленсен тин ҫыран хӗррине шуса тухать. Кунта ӑна, шӑнса кӳтнӗскере, чаҫри салтаксем асӑрхаса госпитале ӑсатаҫҫӗ.

Сывалнӑ хыҫҫӑн И. И. Одюков Латвире, Молдавире пыракан ҫапӑҫусене хутшӑнать, Польшӑра та вут-хӗм айне лекет. Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫинче хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн правительство чӑваш салтакне нумай орденпа медальсем парса чыс тӑвать.

Иван Ильич тӑван яла 1946 ҫ. пуш уйӑхӗнче таврӑнать. Вӑрҫӑчченхи ӗмӗт тепӗр хут аса килет. Малалла вӗренме ҫирӗп шухӑш тытать. Мал ӗмӗт ӑна Шупашкара, Чӑваш педагогика институтне илсе ҫитерет: ҫапла вара 23-

ри каччă, салтак тумне хывса, udinstitut студенчĕ пулса тăрать. 1950 ç. унтан ăнăçлă вĕренсе тухать, хĕрлĕ диплом илме тивĕçлĕ пулать.

1950-1953 çç. И. И. Одюков Канашри учительсем хатĕрлекен институтра аслă преподавательте ĕçлет. Çак вăхăтра вăл наукăпа интересленме пуçлать. Халăх сăмахлăхĕ унăн чăн-чăн юратăвĕ пулса тăрать.

Институтра вĕреннĕ чухне пултаруллă студента М. Я. Сироткин профессор асăрханă, наукăпа ĕçлеме хавхалантарнă. 1953 ç. И. И. Одюков чăвашсен паллă ăсчахĕн аспиранчĕ пулса тăрать, чăваш юрри-сăввине пухать, тишкерет, вĕсем çинчен çĕнĕ сăмах калама тăрăшать.

Виçĕ çул сисĕнмесĕр хăвăрт иртет. Аспирантура пĕтерсен, Иван Ильич педагогика институтĕнче ырми-канми тăрăшать. Тăван халăх культурипе историйĕнче фольклор тĕп вырăн йышăннине, унта ĕмĕрсем хушши халăхăн кун-çулĕпе йăли-йĕркийĕ тата кăмăл-туйăмĕпе шухăш-ĕмĕчĕ сăнарланса юлнине, халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем çыннăн ăс-хакăлне çирĕплетме, ăна кĕрешме вăй-хал тата хавхалантару парса тăнине паллă фольклорист-ученăй, методист-педагог ĕмĕр тăршшĕпе чĕрипе туйса тăнă, хăйĕн пурнăçĕ витĕр кăларнă, вĕренекенĕсене тата пĕрле ĕçленĕ юлташĕсене ăнлантарма тăрăшнă, пысăка хурса хакланă.

1966 ç. январь уйăхĕнче вăрçă çулĕсенче хăй хӳтĕленĕ Ленинградра И. И. Одюков тепĕр çĕнтерӳ тăвать: Пушкин çуртĕнче «Чувашские народные песни социального протеста и революционной борьбы» темăпа диссертаци ăнăçлă хӳтĕлет, филологи наукисен кандидачĕ пулса тăрать. Тепĕр çул, Шупашкарта Чăваш патшалăх университечĕ уçăлсан, вăл унта куçать, 1987-мĕш çулччченех çавăнта тăрăшать: чи малтанах чăваш чĕлхипе литератури кафедрин доценчĕ, каярахпа историпе филологи факультечĕн декан çумĕ, юлашки çулсенче – чăваш литератури кафедрин пуçлăхĕ тата профессорĕ.

И. И. Одюков пултарулăхĕ нумай енлĕ. Каларăмăр ĕнтĕ, вăл паллă методист-педагог та, литературовед-тĕпчевçĕ те, пултаруллă фольклорист та. Иван Ильич хăйĕн тĕпчевĕсенче чăваш халăх сăмахлăхĕ содержанийĕпе те, жанрлăхĕпе те питĕ пуяннине, вăл, летопись пек, тăван халăхăмăрăн ĕлĕкхи

тата хальхи вăхăтри ăс-хакăлĕпе çыхăннине аван уçса кăтартрĕ, çитес ăрусем валли сахал мар паха еткерлĕх çырса хăварчĕ.

И. И. Одюкова фольклорçă тесе хакланă чухне унăн пултарулăхĕнче икĕ йĕр палăртса хăвармалла: пĕрремĕшĕ вăл – халăх сăмахлăхне тишкерсе хак параканĕ тата тĕпчекенĕ, иккĕмĕшĕ – халăх сăмахлăхĕн пуянлăхне пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтараканĕ, пичетлесе кăлараканĕ.

Пĕр-ик сăмахпа чăваш фольклористикин аталанăвне аса илер-ха.

Пурнăçра кирек мĕнле япалана та ăслăлăх тĕлĕшĕнчен ăнлантарса пама тăрăшаççĕ. Халăх сăмахлăхĕ те ку пусăмран аякра тăмасть. Чăваш фольклористикин историйĕ халăхăн аваллăхĕпе çыхăнни пуриншĕн те паллă. Çакна нумай тĕпчевçĕ хăйсен ĕçĕсенче палăртса хăварнă.

Чăваш халăхĕн ăс-хакăл культурине тĕпчесси XVIII ĕмĕрте пуçланать. Вăл вăхăтра чăвашсен çырусăр сăмахлăхĕпе кăсăкланни тăван халăхăмăрăн йăли-йĕркине (этнографине) тĕпчессипе килĕшсе тăнă. Кунта ытларах ют çĕр-шыв тата вырăс историк-этнографĕсен ячĕсене асăнмалла, мĕншĕн тесен чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене вĕсем чи малтан çырса илни паллă. XIX ĕмĕр çурринчен пуçласа çак ĕçе чăвашран тухнă тĕпчевçĕсем – этнографсемпе историксем, чĕлхеçĕсемпе фольклористсем пуçăннă, халăх еткерне пухнисĕр пуçне сăмахлăхăн уйрăм жанрĕсене, вĕсен уйрăмлăхĕсене асăрханă, аталанăвне палăртса хăварнă тата тишкерме тăрăшнă. XIX ĕмĕр вĕçĕпе XX ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш фольклористикинче паллă йĕр хăварнă ăсчахсен шутне Н. И. Золотницкие (вăл сăмахлăха танлаштару меслечĕпе тĕпчекенсенчен пĕри), Н. И. Ашмарина, Г. Т. Тимофеева, Н. В. Никольские, И. Н. Юркина, Г. И. Комиссарова кĕртмелле. Каярах асăннă ученăйсем фольклора тĕпчес ĕçре историлле-танлаштару мелне тĕпе хунă. Ку меслет нумай çулсем хушши фольклористикăра чи пахи шутланнă. Совет саманин 20–60–мĕш çулĕсенче хăш-пĕр фольклористсем (Н. Я. Золотов, И. С. Тукташ т.ыт.те) асăннă меслетрен пăрăнса социалла-класслă мелпе усă курма пикенчĕç, çавна пула чăваш фольклористики пĕр вăхăт малалла аталанаймарĕ, 70-80-мĕш çулсенче вара чăваш фольклорçисем сăмахлăха

тишкерес ĕçре историлле-танлаштару меслетне тĕпе хурса ĕçлерĕç, тĕпчев хыççăн тĕпчев пичетлерĕç, чăваш фольклористикине паха та курăмлă монографисемпе, кĕнекесемпе, статьясемпе пуянлатрĕç.

И. И. Одюков – асăннă меслетпе тĕрĕс те пĕлсе усă куракансенчен пĕри. Вăл наукăна 50-60-мĕш çулсенче кĕнĕ ăсчах. Студент çулĕсенчех халăх сăмахлăхĕпе интересленме пуçланăскер, унăн наукăри пĕрремĕш учителĕ М. Я. Сироткин профессор пулнă. Педагогика институтĕнче вĕреннĕ çулсенче И. И. Одюков Михаил Яковлевич чăваш фольклорĕпе вуланă лекцийĕсене ăша хывнă. Лекцисемсĕр пуçне, çĕр-шывĕпе паллă педагог-ученăй студентсене фольклор материалĕсене пухтарнă, ăслăха юратма, пĕчĕккĕн ĕçлеме хăнăхтарса пынă. Çапла вара, çамрăклах И. И. Одюков, М. Я. Сироткин хавхалантарнипе, фольклор ăслăхĕн вĕçсĕр-хĕрсĕр çулĕ çине тăнă, халăх хушшинче сăмах вĕççĕн упранакан пин-пин ахах пĕрчине ырми-канми пухма пуçланă.

И. И. Одюков çырса пичетленĕ ĕçсем паян – пурĕ 100 яхăн. Тĕпчевсен ытларахăшĕ, тӳрех каламалла, чăвашсен сăмах вĕççĕн ç-рекен хайлавĕсемпе тӳрремĕнех çыхăннă. Çакна та палăртма кăмăллă: И.И. Одюков хăйĕн тĕпчевĕсенче чăваш фольклористикин нумай ыйтăвне çутатрĕ, татса пачĕ. Сăмахран, икĕ кĕнекерен тăракан «Чăваш халăх лирики» тĕпчевĕнче халăх сăмахлăхĕн чи авал пуçланса кайнă тĕслĕхĕсене – юррисене, сăвă-юрă сăнарлăхне тишкерчĕ, вĕсене ушкăнласа тухрĕ, жанр енчен кашнинех хак парса уйрăмлăхĕсене кăтартрĕ.

Пичетленмен, кун çути курман ал çырăвĕсем те нумай унăн. Паян вĕсем И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн наука библиотекинче упранаççĕ. Кунта пурĕ – ал çырусен 106 томĕ тĕпчевçĕсене кĕтет. Унсăр пуçне, паллă фольклорист-тĕпчевçĕ библиотекинче 2487 кĕнеке, революцичченхи тата паянхи тапхăрти журналсемпе брошюрăсем, альманахсем – 170 ытла.

Кирек мĕнле жанра илес пулсан та, И. И. Одюковăн тӳпине асăрхатăн: авалхи чăвашсен мифологийĕ е улăп халапĕсем, чăвашсен космогонилле

шухăшлавĕ е историлле халапĕсем? Пурне те тĕплĕн, çыпăçуллăн тата халăх пурнăçĕпе çыхăнтарса шĕкĕлченĕ. Сăмахран, «Халăх сăмахлăхĕ тĕне хирĕç» (1961), «Классикăлла чăваш литературинчи халăхлăхпа фольклор çыхăнăвĕсем. 1-мĕш пайĕ. Фольклорта халăх шухăшлавĕ йĕркеленни» (1973, В. Я. Канюковпа пĕрле), «Совет саманинчи чăваш халăх сăмахлăхĕ» (1975), «Чăваш халăх лирики» (2 кĕнеке, 1978; 1983), «Авалхи тата Атăлçи пăлхарсем çинчен калакан истори халапĕсем. I-XV ĕмĕрсем» (1984) тата ыт. ĕçĕсем паянхи кун та хăйсен актуаллăхĕпе пĕлтерĕшне çухатман, фольклористсемшĕн паха та курăмлă тĕпчевсем пулса тăраççĕ.

И. И. Одюковăн чăваш фольклорĕнчи уйрăм жанрсене ятарласа тĕпченисĕр пуçне фольклористикăн пĕтĕмĕшле ыйтăвĕсене тишкернĕ наука статйисем те сахал мар. Чи паллăраххисем çаксем: «К истории собирания и публикации чувашского фольклора в 20-30-х гг.», «Н. И. Ашмарин – чăваш халăх сăмахлăхне пухса тĕпчекенĕ», «Сюжетно-образные параллели устных произведений типа «Синичка» у чувашского и калмыцкого народов» т.ыт.те. Асăннă статьясенче автор чăвашсем хушшинче сарăлнă фольклор тĕслĕхĕсене пухас ĕçре кам мĕнле тăрăшнине каласа тухать, вĕсем хатĕрленĕ юрăсен, юмахсен, вак жанрсен пуххисене тишкерсе хаклать, уйрăм тĕпчевçĕсен фольклористикăри выранне палăртать. Паллă фольклорçăсен шутне Н. В. Никольские, Н. И. Ашмарина, Н.Я. Золотова тата ыт. ăсчахсене кĕртет, вĕсем пухнă текстсене хăйĕн тĕпчевĕсенче усă курать, вулакана паллаштарать.

И. И. Одюков халăхăн иксĕлми çăл куçне ятарласа тĕпченисĕр пуçне çав пуянлăха илемлĕ çырулăх ăстисем усă курнине те нумай çырса хăварчĕ. Паллă фольклорист çапла майпа К. В. Ивановăн юмахĕсене, Н. И. Полоруссов-Шелепин сăвăлла легендисемпе халапĕсене, Çеçпĕл Мишшипе Я. Г. Ухсайăн сăввисемпе поэмисене тарăннăн тишкерчĕ, вĕсенче чăваш халăхĕн çырусăр палăк йĕрĕсене тупса палăртрĕ, сăмах ăстисем фольклорти сюжетсемпе сăнарсене калăпланине çирĕплетсе каларĕ. Акă, тĕслĕхрен, Н. И. Полоруссов-Шелепин хайлавĕсене пăхса тухнă май, И. И. Одюков ăста поэт

ача чухне ялти ватăсенчен илтнĕ юмах-халапсене тĕве хурса хайланă произведенийĕсем чăваш халăхĕн историйĕпе тӳрремĕнех çыхăннине палăртать. Ун шухăшĕпе, «Эссепе» баллада тăван халăхăн аваллăх йĕркисене, «Константин хулине туни çинчен чăваш ваттисем калаçни» хайлав – чăваш аслашшĕсен пирĕн эрăн IV-V ĕмĕрсенче Çурçĕр Кавказра тата Дунай тăрăхĕнче пурăннă чух Византия (грек) халăхĕсемпе хутшăннине, «Уксак Тимĕр П-лере илни çинчен» халап – монгол-тутарсем 1395 ç. Атăлçи Пăлхар патшалăхĕпе хулисене çĕмĕрнине, «Пӳлерти Валĕм хуçа çинчен» сăвăлла легенда – Атăлçи Пăлхар халăхĕн XIV-XV ĕмĕрсенчи пурнăç паллийĕсене сăнлаççĕ, иккен.

И. И. Одюковăн тепĕр пысăк пахалăхĕ вăл – халăх сăмахлăхне пухни, çак ĕçе çĕнĕрен чĕртсе ярса наука валли çырусăр сăмах ӳнерĕн пин-пин тĕслĕхне упраса хăварни. Кунта тӳрех вăл йĕркеленĕ «Халăх сăмахлăхне пухмалли программа» брошюрăна асăнмалла. Шел пулин те, 1975 çултанпа пирĕн ăсчахсем асăннă программăна çĕнетеймерĕç пулас, хушса-тӳрлетсе кăларни те пулмарĕ. Чăваш патшалăх университетĕнче вĕрентнĕ çулсенче, астăватăп, И. И. Одюков 1 курс студенчĕсене ялсем тăрăх сăмахлăх тĕслĕхĕсене пуçтарма хăй илсе çӳретчĕ. Вăл ертсе пынипе чăваш уйрăмĕнче вĕренекен студентсем хамăр республикăра кăна мар, тулашри чăваш ялĕсенче пулса мĕн чухлĕ паха материал пухмарĕç-ши? Вĕсем пурте тенĕ пекех И. И. Одюков тăрăшнипе Чăваш патшалăх гуманитарипе ăслăлăх институчĕн наука архивĕнче упранаççĕ.

И. И. Одюков халăх сăмахлăхĕн пур жанрĕсене те пухма тăрăшнă: кунта сĕм авалхи мифсемпе юрăсем те, улăп халапĕсемпе вак жанрсем те, сюжетлă юрăсемпе совет саманинче анлă сарăлнă фольклор тĕсĕсем те. Вăл пухса хатĕрленĕ паллăрах сăмахлăх пуххисем çаксем: «Ăслă сăмахсемпе юптарусем» (1960), «Улăп. Чăваш халăх халапĕсем» (1975), «Совет саманинчи чăваш халăх сăмахлăхĕ» (1975), «Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 6 томпа тухать. 3 том. Юрăсем (1978); 4 том. Юрăсем (1979); 6 том, 2-мĕш пайĕ. Мифсемпе халапсем (1987, Е.С. Сидорова Г.Ф. Юмартпа пĕрле) т.ыт.те.

Çакă та паха: автор хăй пухса йĕркеленĕ кĕнекери материалсене тĕпчевçĕ куçĕпе хакласа тухнă, жанр енчен ушкăнлама тăрăшнă – апла туни кĕнекен пахалăхне те ӳстерет, наука енчен тĕпчеме май туса парать. Çавăнпа И. И. Одюков хатĕрленĕ сăмахлăх пуххисем паянхи кунчен те тĕпчевçĕсемшĕн çав тери паха материал шутланаççĕ.

Ахальтен мар, халăх сăмахлăхне пухса пичетлес, тишкерес тата пропагандăлас ĕçре нумай вăй хунăшăн И. И. Одюкова 1988 çулшăн К. В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх премине парса чысласçĕ. Ку вăл – паллă тĕпчевçĕ-фольклориста сума суни, вăл тăван халăх еткерне ырми-канми тăрăшса тĕпченине уйрăммăн палăртса хаклани пулчĕ-тĕр. Çапла пултăрччĕ!

И. И. Одюков мал ĕмĕтлĕччĕ. Унăн ыră та паха шухăшсем питĕ нумайччĕ. Пирĕнтен аслă юлташăмăр 1995 çулхи апрелĕн 16-мĕшĕнче уйрăлса кайрĕ, çавна пула вĕрентекенĕмĕрĕн хăш-пĕр ыră ĕмĕчĕсем пурнăçланаймарĕç. Апла пулсан, эпир, хаклă Учителĕмĕрĕн вĕренекенĕсем, çав ĕçсене тума тивĕç.

Тăваççĕ те. Сăмахран, паллă педагогăн вуншар вĕренекенĕ чăннипех фольклор ăслăлăхне юратса пăрахаççĕ, хăйсем те каярахпа сумлă тĕпчевçĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсен шутĕнче Атăлçи хутлăхĕнче çеç мар, пĕтĕм Раççейпех палăрнă фольклористсемпе литературоведсем, этнографсемпе этнологсем тата чĕлхеçĕсем – наука докторĕсем В. Г. Родионов, Г. И. Федоров, Ю. М. Артемьев, А. К. Салмин, П. Н. Метин, Н. И. Егоров т.ыт.те. И. И. Одюковăн 20 ытла вĕренекенĕ кандидат диссертацийĕсене ăнăçлă хӳтĕленĕ, паян та республикăри тĕрлĕ вĕренӳпе наука учрежденийĕсенче вăй хураççĕ, хăйсем юратнă Учителĕн пархатарлă ĕçне малалла тăсаççĕ.

Иван Ильич тĕпчевçĕ-фольклорист пулнисĕр пуçне пултаруллă педагог та. Вăл вĕрентсе кăларнă студентсем кашни чăваш шкулĕнчех пур. Аслăран та аслă педагога вĕренекенĕсем кайран та манман. Ун архивĕнче упранакан çырусемпе паллашсан çакă курăнать: вĕренекенсем, учительсем ун патне тăтăшах çырусем çырса тăнă, тĕрлĕ канашсем ыйтнă, хăйсен çитĕнĕвĕсемпе паллаштарнă. Çакна та асăрхамасăр иртме çук: нумайăшĕсене хăй кĕсйинчи

укçи-тенкипех сайра тĕл пулакан кĕнекесем тупса илсе ярса пани те сахал мар пулнă унăн. Çавăн пек вăл чăн-чăн педагог тени!

Педагогикăпа методикăра пĕр вĕçĕм çĕнни шырать И. И. Одюков. «Чăваш литературине шкулсенче вĕрентесси» курспа студентсемпе учительсем умĕнче лекцисем вулать, шкулсем валли программăсем, учебниксемпе хрестоматисем хатĕрлет, вĕрентекенсене пулăшма статьясем çырать. Иван Ильич шкулсем валли хатĕрлесе кăларнă методика пособийĕсемпе паянхи кун та вĕренӳ заведенийĕсенче усă кураççĕ. «Тăван литературăна ачасене лайăхрах вĕрентер» (1957), Д. С. Филипповăпа пĕрле çырнă «Тăван литературăна вĕрентессине лайăхлатмалли хăшпĕр майсем» (1958) статйисем, «Чăваш литературине шкулта вĕрентес методика» (1978) программа учительсемшĕн пахалăхне халĕ те çухатман. И. Одюков шкулсем валли учебниксем çырма та ерçнĕ. Унăн Г.В. Лукьяновпа пĕрле хатĕрленĕ 4-мĕш класра вĕренмелли «Тăван литература» хрестоматийĕ 11 хутчен те çапăнса тухрĕ.

Ахальтен мар, педагогикăри паха ĕçсемшĕн И. И. Одюкова 1967 ç. «Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ» значокпа, 1973 ç. «Чăваш АССР шкулĕсен хисеплĕ учителĕ» ятпа чысларĕç.

Иван Ильич студентсемпе те, пĕрле ĕçлекен юлташĕсемпе те пĕр чĕлхе тупма пĕлнĕ, сăпайлăхĕпе, ырă кăмăлĕпе хăй патне туртнă, сумлă та пархатарлă ĕçĕсем чăваш ăслăлăхĕнче яланлăхах кĕрсе юлнă. Çавăншăнах ăна хисепленĕ, хисеплеççĕ те. Апла пулсан, чăваш халăхĕн сумлă ывăлĕн тата ăсчахĕн ятне асрах тытасчĕ.

## Усă курнă литература

[1] *Тимакова, Т.* Салтак: учитель: тĕпчевçĕ. / Т. Тимакова // Коммунизм ялавĕ. – 1973. – 30 сент.

[2] *Воронцов, Г.* Мал ĕмĕчĕ пысăк / Г. Воронцов // Коммунизм ялавĕ. – 1983. – 27 сент.

[3] *Тенюшев, И.* Вăл Атăлъялтан / *И. Тенюшев* // Ленинец. – 1983. – 27 сент.

*Ендеров, В. А. Чăваш халăхĕн сумлă ывăлĕн тата ăсчахĕн ятне асра тытса / В. А. Ендеров // Çулталăк кĕнеки = Календарь года : 2008. – Чебоксары, 2007. – С. 271-277.*